## ÇЕМЕН ЭЛКЕР ÇУРАЛНĂРАНПА – 120 ÇУЛ





**Елкер С.**

# Хĕнхур айĕнҫе.

*(„Айăпсăр таркăн" ятлă историллĕ поемăн малтанхи сыпăкĕ).*

Пурнăç хÿри пăрнăç.
(Ваттисен сăмахĕ).

Ни пурмис мар, ни тийек мар—
Пуççапмасăр кĕмелле мар.
(Авалхи йуптарулă йумах).

I.

Пĕр ҫапсăр, паллă мар Кушлавăш уйĕ
Хура вăрманпа киленсе выртаĭ;
Хĕлле те, çулла та—такам та туйĕ,—
Мăн вăрман кунта хÿглĕхне тытаĭ.
Ырлăхлă çĕршывçке... пурăнма калкал:
Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман!..
Пĕрмкĕ ĕмĕр çех пирĕнтен авал
Вĕçĕ хĕрри ун ниçтан курăнман:
Ĕмĕрсем ÿснĕ йаштака хырсем
Унта пĕлĕте кармашса ларнă,
Кунĕн те çĕрĕн канмасăр вĕсем
Канашланнă пек хĕрсе кашланă.
Çав ватă хырсем кашлависенҫе
Çитес çулсенҫи хурлăх сисĕннĕ,
Вĕсенĕн тимлĕ канашĕсенҫе
Ĕмĕрсем хăвăрт йухни пĕлĕннĕ.
Хырлăхпа йунашар ушах [1]) мăк шурри
Выртнă талкишпе унта сарăлса,
Планĕ-луçĕсем, пурге мĕн пурри,
Пурăннă кунта йалан савăнса.
Мăк шурри леш йенĕ—ҫăрăшлă вăтлем,
Хĕвел çуттине виттĕр ÿкермен;
Çăмламас, хăмăр, хайар упасем
Çак кăмăрлăха [2]) никама кÿртмен...
Унтах тĕлĕпе шалкăм, ватă çам [3])
Çăра çуҫçипе шавланă текех,
Унта тĕрлĕрен кайăк-кĕшĕксем
Йурра йантратнă кунĕ çĕрĕпех.
Унта та кунта ахрат [4]) çырмисем
Выртнă пытанса вăрман тĕпĕнҫе,
Çутă тĕкĕр пек тăрă шывĕсем
Курăк айсемпе йукнă вĕсенҫе.
Йантака ҫăрăшсем вăрман ăшĕнҫен
Пăхнă кармашса тĕнҫе хĕрнелле,
Айакри уйсенҫен, питĕ инҫетрен
Курăннă вĕсем ҫиркÿ тăрилле.
Етемме палламан вĕлле хурҫĕсем
Ирĕклĕн вĕçсе çавпех сĕрленĕ,

---

[1]) Ушах—хаҫака.
[2]) Кăмăр—çатрака.
[3]) Çам—çулçăллă вăрман.
[4]) Ахрат—питĕ тарăн çырмасене „ахрат çырми" текçĕ.

# «Хĕн-хур айĕнче» поэма историйĕнчен

«Хĕн-хур айĕнче» сăвăлла хайлава Çемен Элкер, хăй аса илнипе килĕшӳллĕн, çичĕ çул ытла çырнă, «1923 çулта çырма тытăнса 1930 çулта пĕтернĕ». Малтан унăн жанрне сăвăç «Айăпсăр таркăн» ятлă историлле поэма тесе палăртнă, «Хĕн-хур айĕнче» вара малтанхи сыпăкăн ячĕ кăна пулнă-ха. 1926 çул пуçламăшĕнче тухнă «Сунталта» (№1) поэмăн малтанхи ячĕ вырăнне пĕрремĕш сыпăк ячĕ тăрать, «Хĕн-хур айĕнче». Кайран çав пĕтĕм хайлава пĕлтерме пуçлать. 1926-1927 çулсенче Ç.Элкер поэмăпа пусăрăнсах лараймасть, 1928 çул варринелле кăна малалли сыпăксене пичетлеме хатĕрлесе çитерет. 1929 çулхи «Сунталăн» пĕрремĕш номерĕнче поэмăн XIII сыпăкĕ (кĕнекере вăл «Шăннă вăрман хӳттинче» ятлă) кун çути курать, вĕçĕнче редакцирен çапла пĕлтерни пичетленет, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăн малалли сыпăкĕсем татах та вăрăм пирки ăна пĕтĕмпех «Сунталта» пичетлесе кăларма майĕ çук». Çав вăхăт тĕлне поэт хайлавне çырса пĕтерменнине эпир малалли сыпăксенче мĕн пулассине çырса кăтартнинчен те аван пĕлетпĕр. Унта, сăмахран, «Улпут хресченĕсем патĕнче», «Инкек çине синкек», «Чакка – ял-йыш сутĕнче» сыпăксене пачах та çырма палăртман. «Çирĕм çултан» сыпăкри ĕçсем те çапларах пулса иртмелле пулнă, Чакка çухални шăп 20 çул иртет. Ватăлнă Текейпе Итрен, Текейĕн тарçине – тăлăх Арлана илсе арман чулĕ илме Чĕмпĕре каяççĕ. Çуллахи шăрăх кун вĕсем Чĕмпĕре çитсе Атăл хĕррине анаççĕ. Çав вăхăтрах Атăл тăрăх паршăсем туртса хăпарнă пурлаксем çыран хĕрринче канса лараççĕ. Пурлаксем хушшинче йывăр ĕçпе курпунланнă, хуйхăпа кăвакарнă чирлĕ Чакка та пур-мĕн. Вăл Текейпе Итрене паллать. Тĕлĕнеççĕ. Лешсем Арлан унăн ывăлĕ пулнине пĕлтереççĕ. Чакка хурланать. Текейпе Итрен каçару ыйтса Чаккана тăван ялне таврăнма чĕнеççĕ. Чакка килĕшмест, унăн Чул хулана çитмелле, унта вăл хăйпе пĕрле Арлана та илсе каять.

Ç.Элкер XXIII сыпăкра çапла çырса кăтартма ĕмĕтленнĕ: «Чĕмпĕртен тухса Шупашкар енне çывхарсанах Чаккан чирĕ вăйланать. Ăна пурлаксем ĕретĕнчен кăларса укçа тӳлемесĕрех пăрахса хăвараççĕ. Виличчен вăл Арлана хăй пурнăçĕ çинчен тĕппипех каласа пĕлтерет. Арлан унăн виллине Атăл хĕрринчи юман ращине пытарать. Ашшĕ тăпри çине ларса Атăл хумĕсем çине нумайччен пăхса шухăшлать. Унтан ашшĕ паллаштарнă тĕнчен тĕрлĕ енĕсем çинчен шухăшласа ирĕксĕр тăван çĕр-шыв еннелле танкăшать».

1931 çулта пичетленнĕ иккĕмĕш вариантра Чакка ывăлĕ Илюш ятлă, вăл пурлаксемпе «тĕнчене тухса çӳреме» каять, «вăрман тĕпĕнче хĕн-хур тӳсме» пачах та килĕшмест. Автор хăйĕн малтанхи шухăшне 1929 çул хыççăн класс кĕрешĕвĕ еннелле чылай сулăнтарнă, çавăнпа та поэмăн вĕçĕ чылай ĕнентерӳсĕртерех

пулса тухнă темелле. Хайлавăн виççĕмĕш вариантне автор 1946-1947 çулсен чиккинче çырса пĕтерет. «Икĕ сыпăкне (VII, IX сыпăксемччĕ пулас) кăларса пăрахрăм. Вĕсен вырăнне çĕнĕрен виçĕ сыпăк (750 йĕрке) çырса хушрăм», – пĕлтерет Ç.Элкер пĕр çырăвĕнче 1950 çулсен вĕçĕнче «Хĕн-хур айĕнче» поэмăн виççĕмĕш редакцине вырăсла куçарма пуçăнсан, унăн вĕçне улăштарма сĕнеççĕ куçаруçăсем (Илюшăн бурлакра мар, Пахомка çыннисемпе вăрман хусахĕнче çÿремелле иккен). Çапла майпа хайлавăн тăваттăмĕш редакцийĕ çуралать. Чи малтанхи редакци ыттисенчен ăнаçлăрах тата тенденцисĕртерех шăранса тухнă. Иккĕмĕш вариант та, юлашки сыпăкĕсене шута хумасан, япăхах мар темелле. Виççĕмĕш вариантра Чаккана революционер пекех кăтартнă, çакна вăрçă хыççăнхи романтикăпа çыхăнтарса ăнлантармалла-тăр. Поэма нумай вариантлă пулнин тĕп сăлтавĕ – çыравça критиксем тăтăшах «вĕрентме» хăтланни. Çемçе чĕреллĕ поэт çав хаяр критиксене итлемесĕр тăма пултарайман – ку вăл унăн айăпĕ мар, пысăк инкекĕ. Паянхи вулавçă çакна тĕрĕс ăнланасса шанса ĕненетĕп.

**Виталий РОДИОНОВ, филологи наукисен докторĕ**

## Çемен ЭЛКЕР

# Хĕн-хур айĕнче

### Сыпăк

*"...Влаçа пăхăнман казаксен пĕчĕк ушкăнĕ пуçласа янă пăлхав... вăйлăланса патшалăха Çĕпĕртен Мускав таран, Кубаньрен Муром вăрманĕсем таран кисрентернĕ пăлхав çапла майпала пĕтнĕ. Çапах та пурнăç татах нумай вăхăт хуши пĕтĕмĕшпех лăпланса çитеймен-ха... Хăрушла пăлхавăрçăн ячĕ вăл тустарса çÿренĕ вырăнсенче хальччен хыттăн янăраса тăрать. Пугачев вăхăчĕ текен юнлă саманана халăх паян кунччен лайăх ас туса пурăнать..."*

*А. С. Пушкин. "Пугачев историйĕ"*

Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртать.
Çулла е хĕлле – такам та туйĕ –
Вăрманлăх кунта хÿтлĕхне тытать.
Хаваслă кĕтес! Сывлать вăл кал-кал...
Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман.
Пĕр-икĕ ĕмĕр пирĕнтен авал
Вĕçĕ-хĕрри ун ниçта курăнман.
Ик-виççĕр çулхи яштак ват хырсем
Кармашнă унта пĕлĕте пăхса,
Кунĕн те çĕрĕн канмасăр вĕсем
Кашланă текех тем канашласа.
Çак хырлăхсенчех ушах мăк шурри
Талккиш-талккишпе выртнă сарăлса.
Пăши-пăлансем, – сăрри, чăпарри, –
Çÿренĕ унта шурлăха çăрса.
Мăк шурлăх леш енĕ – чăрăшлăх, вĕтлем –
Хĕвел çутине çĕр çине яман?